● *Çĕнĕ кĕнеке*

# Вĕрентекене айван пулма ирĕк панă




Чăваш кĕнеке издательствинче Борис Чиндыковăн "Тухса кайиччен" хайлавсен пуххи пичетленсе тухрĕ. Унта калавсем, драмăлла повеçсем, пьесăсем кĕнĕ. Кĕнеке хуплашкине Анатолий Рыбкин ӳнерçĕн картинипе сăн кĕртнĕ.

Иртнĕ ĕмĕрĕн 80-мĕшпе 90-мĕш çулĕсен чиккинче Борисăн ячĕ тăван тăрăхра питĕ паллăччĕ. Эстрада çăлтăрĕсем унăн Николай Казаковпа пĕрле çырнă юррисене янрататчĕç /хĕрсем вĕсен "Пĕчĕк тăлăх хĕрачине" илтсен Инди фильмне курнă чухнехи пекех куççульленетчĕç/. Чиндыковăн пьеси тăрăх Чăваш патшалăх академи драма театрĕ лартнă "Çатан карта çинчи хура хăмла çырли" тĕрлĕ фестиваль-конкурсра парне хыççăн парне çĕнсе илетчĕ /чăвашра хура хăмла çырли лартса çитĕнтересси те çак спектакль витĕмĕпе чылай ӳснĕ тетчĕç/. Хаçатсенче Чиндыков пуçарнă диспутсем пуринчен те хĕрӳллĕрехчĕ. Республикăра чи малтан хăй шучĕпе кĕнеке çаптарчĕ, "Аван-и" хаçат кăларса тăма пуçларĕ. Çав вăхăтри чăваш çамрăкĕ Чиндыков витĕмне самаях лекнĕччĕ – юратма та вĕсене çав пичет кăларăмĕ вĕрентетчĕ.

Унтан Борис Борисович "ЛИК Чувашии" журналăн тĕп редакторĕ пулчĕ, пьесишĕн патшалăх премине илчĕ. Вара Мускава парăнтарма тухса кайрĕ... Анчах тăван ен алăкне те хытах хупмарĕ – хăй пирки аса илтеркелесех тăчĕ. Çамрăксен театрĕнче "Масаркасси ясарĕн 77-мĕш матки" стриптизлă фарс сцена çине тухрĕ. Академи театрĕ унăн "Хура чĕкеç" монодрамине халăх умне кăларчĕ. Апла пулин те чăвашла çыракан-вулакан-итлекен ăна /10-15 çул иртнĕ хыççăн/ манма пуçланăччĕ ĕнтĕ. Чăваш прозин антологине хатĕрлекенсем те аса илеймен ăна.

Борис Борисович хăй Чăваша таврăннине пĕлтĕр "Нарспи" мюзиклпа /ăна унăн либреттипе лартнă/ мăнаçлăн пĕлтерчĕ. Халĕ ак, "вулаканăм, ас тăватăн-и" тенĕ пек, кĕнеке кăларчĕ. Ретро сĕмĕллĕ хайлав пуххинче ытларах "тахçанхи пĕлĕшсемпе" тĕл пулатпăр: "Hotel Chuvashia", "Туй каçхине", "Алăксем умĕнче", "Çур çĕр хыççăнхи апатлану", "Çатан карта çинчи хура хăмла çырли" т. ыт. те. "Масаркасси ясарĕн 77-мĕш матки" вара пуçласа пичетленет, театрта курнинчен пуянрах та кăсăкларах пек туйăнать.

Эсир асăрханă-и: Чиндыковăн калавне е пьесине вулама пуçласанах ырă мара сисетĕн те хайлаври вăл-ку сăнаршăн пăшăрханма пуçлатăн, анчах авторăн пĕр шелсĕр приговорне хирĕç мĕнех тăвайăн? Лешĕ хăйĕн геройĕсене пĕрин хыççăн теприне "тирпейлет": Валюкка ӳсĕрле вилсе выртать /"Валюккапа Кĕтерин"/, Юлия шыва путать /"Кĕлчечексем"/, Боб чӳречерен татăлса анать /"Нараста"/, Николас хăй çине алă хурать /"Çур çĕр хыççăнхи апатлану"/... Çĕрлехи хула та Чиндыкова "аслă масар пек" туйăнать /"Йĕпхӳ"/. Тен, синкерлĕх серепи – унăн илемлĕх шухăшлавĕн ĕлĕкхи палли?

Совет тапхăрĕнче кун çути курнă хайлавĕсене автор улăштарманпа пĕрех. Тĕслĕхрен: "Аçу" калаври куçа курăнман пархатарлă сăнар – *партком секретарĕ* – хăй вырăнĕнчех /хальхи куçпа пăхсан, вăл "Пĕрлĕхлĕ Раççей" партире тăма пултарать/, *ял Совечĕн секретарьне* асăнни вара тухса ӳкнĕ. "Геннади Андрейч ухмах учитель" калаври сысна çурисем халь *çуйхашма* тата *нăриклетме* "вĕренсе çитнĕ" /редакторсем "дрессировка тунă" пулмалла/. Ĕлĕкрех вĕсем *макăрма* кăна пĕлетчĕç. Калавĕ хăй те ун чухне урăхларах ятлăччĕ – "Геннади Андрейч ухмах библиотекарь". Совет цензури Борис Чиндыкова учительсене "ухмаха кăларма" ирĕк паман /вĕрентекен ун чухне хисеплĕ çын пулнă!/. Вара çыравçăн Геннадий Андрейча ирĕксĕрех библиотекарь тума тивнĕ /ун чухнехи идеологи те библиотекарьсене айван пек, пурăнма пĕлмен пек кăтартма чарман/. Хальхи самана кирек кама та "шăхăрман пуçлă" тума хатĕр. Çавăнпа усă курса Борис Борисович тахçанхи ĕмĕтне пурнăçланă – Геннадий Андрейчăн чăн професси пирки тӳррĕн каланă.

Кĕнекин ятĕнче "тухса каяссипе" хăратать пулин те Чиндыков Чăваш Ене пуçĕпех таврăнчĕ пулас. Пилĕк уйăх пек каялла – конкурс витĕр тухса – Шупашкар районĕн хаçатне ертсе пыма пуçларĕ. Арăмĕн тăван районĕнчи пичет кăларăмне кăсăклă тăвасшăн, мала кăларасшăн хытă тăрмашать. Аналитиксем ĕнентернĕ тăрăх, "Тăван ен" хаçат малашне лайăх çĕпрепе хунă чустана аса илтерĕ – тиражĕ хăвăрт хăпарса пырĕ, хăшĕ пĕрин ăна чышса тăма тивĕ.

Чăваш культурин çырулăх уçлăхне Борис Чиндыков капăр çĕнĕрен тухать. Вăл таврăнчĕ... "Тухса кайиччен" иртнине пулассипе çыхăнтарасшăн.

■ **Геннадий ДЕГТЯРЕВ**